К84.89(Чув)
А90
Ч-38626

Светлана АСАМАТ

# Çумăр ташши



Национальная библиотека ЧР
4-038626

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К84.89(=Чув)
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
А 90

**Светлана АСАМАТ**




СĂВĂСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2004

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2Рос=Чув) — 5
А90

Художникĕ ***Немцева Т.И.***

ч-38626
Национальная библиотека Чувашской Республики
ПРОВЕРЕНО 2010 ОКТ 2017

**Светлана Асамат**
А 90 Çумăр ташши: Сăвăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. — 32 с.

Светлана Асаматăн «Çумăр ташши» кĕнекине вуланă май кĕçĕн тата вăтам классенчи шкул ачисен кăмăл-туйăмĕ, шухăш-ĕмĕчĕ куç умне уççăнах тухса тăрать.

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2Рос=Чув) — 5

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2004
© Светлана Асамат, 2004

ISBN 5-7670-1321-7

## ХИСЕП

— Вĕренетпĕр вырăсла,
Нимĕçле, акăлчанла.
Ют чĕлхепе калаçни,
Вулама, çырма пĕлни
Кирлĕ пулатех пире.
Компьютерпа çаптарас,
Интернетра сас парас
Пĕлĕве — ÿстермелле,
Ĕçлеме — вĕренмелле.
Ĕçне тусан укçине те
Шута илме пĕлмелле.

— Ăслă-çке эс, Кулине.
— Ăслă пулас килнипе çеç
Ăслă пулмăн, асанне.
— Хамăр тăван чĕлхене
Манса каяс марччĕ те...
— Мĕн калатăн, асанне?..
Хамăр тăван чĕлхене
Манас çук эп ĕмĕрне.

## ЧĔПСЕМ

Çăмартана ватса тухнă
Кайăк-кĕшĕк чĕпписем
Сарă — сарă чечек пек,
Çемçе — кушак çăмĕ пек.
Пĕр-ик уйăх иртсе кайсан,
Шимп-шимп! тума пăрахсан —
Хуралаççĕ, шуралаççĕ,
Хĕрлĕ, симĕс тĕк хушаççĕ,
Тем пĕлсе чăпарланаççĕ...



## ШЫВ ХЁРРИНЧЕ

Пысӑк Якур шыва кӗрет,
Кӑвакал пек чӑмкалать,
Кӳлӗ тӗпне ик аллипе
Хыпашласа пӑхкалать.

Пилӗк таран тӑрӑ шыва
Пӑтратать те пӑтратать,
Шыв хӗрринчи ачасене
Шак чул тупса кӑтартать.

Пӗчӗк Якур шыва кӗмест,
Хальлӗхе ишме пӗлмест.
Амӑшӗ асӑрхаттарнӑ —
Урине те йӗпетмест.

## КӐВ-ВАК

Симӗс шапа чӗпписем,
Симӗс курӑк тӗслисем,
Симӗс курӑк ӑшӗнче
Пытанмалла выляççӗ,
Тринкки-тринкки сике-сике
Пӗрне-пӗри шыраççӗ.

Ачисене хуралласа
Амӑш çыранта ларать,
Кӑвак шыва мухта-мухта
«Кӑв-вак, кӑв-вак» юр юрлать.

## НУ, ЧӐВА-АШ!

Картишӗнче йыт вӗрет,
Вучахра яшка вӗрет,
Урам тӑрӑх вашлаттарса
Урлӑ-пирлӗ ҫил вӗрет.

Асанне мана паян:
«Чарӑн-ха тӗпӗртететме,
Лар та сӗтел хушшине —
Ҫыр, вула, сӑрла, шутла...
Тем тума ӑш-чик вӗрет,
Мӗскере-ши пӗлтерет?
Ҫум ҫумлам-ха, эс — вӗрен», —
Терӗ те кӑштӑртатса
Тухса кайрӗ пахчана.

Пӗчӗк пусӑма ватса
Эп ларатӑп шутласа:
«Вӗри чунлӑ чӑвашсен
Ура тӗпӗ те вӗрет,
Ал тупанӗ те вӗрет,
Ӗҫӗ те сиксех вӗрет.
Ну, чӑва-аш, тӗлӗнтере-ет».

## КӖТЕРИПЕ ВАЛЕРИ

— Лупашкаллӑ ҫарана
Чечек татса ҫӳреме,
Кайӑк юрри итлеме
Атя пӗрле, Кӗтери...
— Аюк, пымас, Валери,
Эп хӑратӑп ҫав тери.
«Тӗкӗлтура мӑнтӑр, хӑмӑр,
Хулӑн саспа нӑрлатать,

Асăрханса çӳремесен
Çыртса илме пултарать.

Вĕлле хурчĕ çутă сарă,
Çинçерех саспа юрлать,
Пыл пуçтарма кансĕрлесен
Сăхса илме пултарать», —
Терĕ мана куками,
Эп хăратăп çав тери.

— Эп сана алран тытам-и,
Çавăтса илсе каям-и?
Асăрханса çӳресен
Тивес çук пире вĕсем.

## ÇИВĔТ

«Анне, çӳçе касса яр-ха,
Çивĕтлесе ывăнтăм,
Манăн çӳç часах ӳсет,
Тепĕр виçĕ уйăхран
Шкула бантик çыхса кайма
Вăрăмланма ĕлкĕрет.
Ах, аннеçĕм, те калас?
Ăнланма пултараймас...
Ту касри Степанов Вася
Темшĕн çивĕтрен туртать,
Толик те туртса пăхасшăн,
Вăл ăна тĕртсех ярать.
Манăн çивĕтпе, кала-ха,
Мĕн тесе хуçаланать?..» —
Амăшне ыйту парать,
Хуравне кĕтсе ларать.
Мĕн тесе калас пулать?..



## ПАВĂЛ

Павăл аннă шыв хĕрне,
Ылтăн пулла йыхăрать,
Чире кайнă ашшĕ валли
Сывлăх ыйтма шухăшлать.
Ашшĕ Чечен вăрçинчен
Уксах пулса таврăннă,
Питĕ хаяр çапăçура
Питĕ йывăр аманнă.
Халĕ вырăнпах выртать,
Татăк ури ыратать.

Павăл ларнă кукленсе,
Йăлăнать ĕсĕклесе:
«Ылтăн пулă, курăнсам,
Ман аттене пулăшса-ам.
Эсĕ пулăшаймасан,
Эс те сыватаймаса-ан
Вара мĕскер тумалла-а?..
Юлас килмест тăлăха.
Асатте те вăрçăра
Вилнĕ Афганистанра,
Уса-ал вĕсем, çав çынсем! —
Вăрçă пуçлаканнисем!
Ачасен те вăрçăлла
Выляма чарăнмалла,
Лавккара пăшал тетте
Суттарма пăрахмалла.
Тетте-и вăл? — пистолет,
Тетте-и вăл? — автомат,
Телевизор пăхатăп,
Тетте мар вăл, куратăп».

Павăл чĕтресех йĕрет,
Çыран хĕрри ишĕлет,
Ылтăн пулă ун сăмахне
Хурлăн тимлесе итлет.

## КĔВĔ

Асанне-çăлкуç кĕсле калать,
Курăк-кинеми такмак калать,
Шăпăр янрататъ мучи-йăмра
Савнă ялăмри пĕр айлăмра.

Шăп ларатăп йăпанулăн киленсе,
Çаврăм-çаврăм юрă-кĕвĕ вĕренсе...

## АМĂШĔ

Ачасем каникулта,
Çывăраççĕ чăланта.
Амăш кĕрсе тăчĕ те,
Шутламалла вылянă пек,
Тĕке-тĕке вăратрĕ:

«Ăш утиял айĕнчен
Сик тух, Марине,
Эс паян урай çăван,
Тавраллипех тасатан.
Сик тух, Алюшша,
Эс картиш шăлса каян,
Чăх-чĕпе кĕрпе паран.
Вĕçелиспа Кĕркурие
Вăратмастăп, çывăрччăр,
Ыран ирпе тăратап,
Ыран сире кантарап.
Чей вĕретнĕ, яшка пиçнĕ,
Апат çиме манас мар,
Хушнă ĕçрен тарас мар», —
Лăпкăн хытарса хăварчĕ,
Хăй — ĕçне тухса чуптарчĕ.

## УТМĂЛ ТУРАТ

«Чăнах та-ши утмăл турат?» —
Шухăшларĕ Митрафан,
Утмăл турат чечекне
Тăпăлтарчĕ тымартан.

Пĕчĕк турат, пысăк турат —
Ай шутла-ать, муталаша-ать.
Утмăл, çитмĕл, сакăр вуннă —
Аташса кайма пулать.
Çеçкине шута илес тĕк —
Шучĕ татах хутшăнать.

«Пăрахмастăп эп сана,
Парнелетĕп Гальăна». —
Чечекне алра тытса
Вăл пырать йăл-йăл кулса.

## ЫЛТĂНПА КĔМĔЛ

— Кам çуралнă, ылтăн-и?
— Кам çуралнă, кĕмĕл-и?
— Ашшĕ-амăш телейне,
Ваттисен савăнăçне
Мĕтри Иван йăхĕнче
Ылтăн-ывăл, кĕмĕл-хĕр,
Йĕкĕреш çуралнă.
Çак хыпара илтнĕ-илтмен
Якку киле чуптарнă.
— Атте, эпĕ ылтăн-им,
Маня йăмăк кĕмĕл-им?
— Анне — тăван кил ăшши,
Атте — пурнăç тĕрекĕ,
Ачи-пăчи — ырлăх-пурлăх:
Ылтăнĕпе кĕмĕлĕ.

## ÇУМĂР УМĔН

Сулхăн. Хурăн айĕнче
Славик урамра тăрать,
Пĕр япала асăрхать:
«Тăнлă-ши вара вĕсем,
Курăксемпе чечексем?..
Сивĕ çумăр çăвас умĕн
Çеçкисене çулçисемпе
Хупласçĕ те хурасçĕ,
Хĕвел шевли ăшăтмасăр
Куç хăрпăкне уçмасçĕ».
Малтикасра пурăнакан
Хĕр ача иртсе пырать:
— Анжелика, эсĕ паян
Ытла çӳхе тумланнă.
— Çанталăкĕ улшăнасса
Ирпе ăçтан шутланă?
— Шăннă сăмсу — кишĕр пек,
Чирлесе ӳкен кун пек.
Ман пиншака уртса яр,
Хăвăртрах киле чуптар.
— Шапăртатма пуçласан
Таня патне кĕретĕп.
— Юрĕ, ăсатсах ярам,
Юнашар чупса пырам.
Акă тăхăн, ан вăтан,
Ан вăтан, атту шăнан.



## ТЕЛЕЙ

Ик çунатне шартлаттарса,
Ик урипе таплаттарса
Чĕп кăларнă ами тавра
Мăйне тăсса, какаклатса
Хур аçи ташша çапать.
Йăлттам сарă чĕпписене
Тĕксе илет, çупăрлать,
Ял урамне янăратса
Савăнăçне палăртать.
Илле Коли хур пăхать,
Иртсе пыран Кенатие
Чарчĕ те çапла калать:
— Куртăн-и, мĕнле ташлать?
Ман атте те, эп çуралсан,
Ача ури çунă чухне —
Анне тавра ташланă,
Кукка купăс каланă,
Инке юрă юрланă.
Асаттепе асанне,
Кукаçипе куками —
Сĕтел тавра, сăпка тавра
Çавра çăкăр çаврăнă.
— Астумастăн-им вара,
Эсĕ мана кун çинчен
Пĕлтĕр пĕрре каланă.
— «Эсĕ лайăх çемьере
Телей курма çуралнă», —
Терĕ мана хуларан
Килсе кайнă Шураппа...
— Эс, телейне курсассăн,
Илсе пыр-ха ман пата.
— Сан пата-и? Мĕн тума?
— Санăн çеç-им-ха, Коля́,
Курмалла çав телея?..

## ВĂЙ ВИÇНИ

— Акă сан карта, акă ман карта,
Эс те пĕр патша, эп те пĕр патша.
Эпĕ — ку енче, эсĕ — леш енче,
Вăрçălла выляс, вăй виçсе пăхас.
Эпĕ çĕнтерсен — тыткăна лекен,
Ман умра, асту, пĕшкĕнсе çӳрен.
Эсĕ çĕнтерсен — эпĕ парăнмас,
Эпĕ сан умра пуç тайса тăмас.
— Çитăр, ку вăййа эпĕ выляймас,
Юлташпа вăрçма асатте хушмаç.

## ЧЕМПИОН

Икĕ юлташ урампа
Шапăлтатса пыраççĕ:
— Малтанах сăмах татар,
Ярас мар хушша хăр-хар.
Виçĕ мечĕк кĕртсенех
Улшăнса тăратпăр,
Кам мĕнле чупать, тапать,
Вратарьте мĕнле тăрать —
Тĕрĕслев тăватпăр.
А кайра-ан, пире курса,
Пĕтĕм ял пуçтарăнать,
Питĕ вăйлă пĕр команда
Футболла тапма пуçлать.
Хальлĕхе — тарламалла,
Хальлĕхе — вĕренмелле,
Икĕ мечĕк, виçĕ мечĕк
Киветсе çĕнетмелле.
Чемпион ятне илсен
Вăт пула-ать, аван пулать!
— Питĕ çăмăл калаçан,
А шкула хăçан каян,
А урок хăçан тăван? А-а...
— Тек ним те ан кала,
Вундер-киндер Михаля.
Кай, выляс килмест пулсан,
Лар, чупас килмест пулсан.
Сансăр та юлташ тупап,
Пурпĕрех футбол выляп,
Пурпĕрех ак, курăн тейĕн,
Чемпион пулса тăрап.

## ÇĂЛТĂР

Ача-пăча каç пулттипе
Пĕр ушкăна пухăннă,
Пĕр-пĕрин̆пе шăкăл-шăкăл
Юмахлама пуçăннă:

— Çӳл тӳпери пин çăлтăра
Кам çутатса çӳрет-ши?
— Çавăн чухлĕ çăлтăр çутма
Мĕн чул вăхăт кирлĕ-ши?..

— Люся, кур-ха, çăлтăр ӳкрĕ,
Такам тĕртсе ячĕ-ши,
Хăй татăлса анчĕ-ши?..

— Мĕншĕн çĕре ўкет-ши?
Мĕншĕн çунсах пĕтет-ши?

— Сирĕн килти люстра çинче
Миçе лампочка çунать?
Кнопка çине пусатăн та,
Пурте харăс çутăлать.
— Çăлтăр тухман каçсенче
Леш, çутатса çўрекенни,
Ĕçе тухма манать-ши,
Свечĕ пĕтсе ларать-ши?

— Çăлтăр çуккă каçсенче
Мĕнле хытă çил ула-ать,
Пĕлĕтсене çавăрттарса
Мĕнле хытă хăвала-ать.
— Мĕн пысăкăш юпасене
Ўпĕнтерсе хăварать.
Мĕн пысăкăш йывăçсене
Тăпăлтарса кăларать.

— Çав çил-тăвăл хыççăн вара
Юпа кайса касмалла-а,
Вырнаçтарса лартмалла-а,
Пралуксене сыпа-сыпа
Улăштарса çакмалла-а,
Ĕç пайтах унта...
— А-а-ха-а...



## ВАÇÇИЛ

«Пăх-ха эс, сана-и-ха,
Итлессӳ килмест-и-ха?
Акă — пиçиххи салтап,
Çаптарап, ыраттарап.
Телевизора сӳнтер,
Пĕрмаях ан кĕрлеттер», —
Мăкăр-мăкăр мăкăртатрĕ
Темшĕн тарăхнă кукаç.

«Ан тавлаш, чипер калаç», —
Çенĕке илсе тухать те,
Куками те ăс парать:
«Лайăх çын тăвас тесе
Вĕрентетпĕр вĕт сире.
Пусăран шыв ăсса кил,
Эс итле пире, Ваççил».
«Вăт матту-ур, вăт ку — ача-а!» —
Тет кукаç шывне сыпса.

## САРĂ КАЙĂК

Сарă кайăк йăвара
Сарă тĕлĕк тĕлленет:
Сарă чĕппи улăхра
Сарă юрă кĕвĕлет,
Çулçă айне пытанса
Сарă сасне тĕрĕслет.

Хĕвел тухăç саралнă,
Сарă вăрман вăраннă,
Сарă кайăк юрланипе
Сарă тавра çуталнă.

Ч-38676



Национальная библиотека Чувашской Республики

## САШУКПА ПЕТЮК

— Çывăрман-им эс, Петюк,
Çăвар карса ларатăн?
— Кукам канăç памарĕ,
Ыйхă туртса пулмарĕ.
«Çумăр килет, тăмалла,
Тухăр часрах пахчана.
Ёнер çулнă паккуссене
Купаласа хумалла.
Çумăр çусан — йĕпетет,
Утă техĕмĕ пĕтет», —
Терĕ, тăтăмăр вара...
— Уттине пуçтартăр-и?
— Купаласа лартрăмăр,
Çумăр килчĕ, çумарĕ,
Хĕвел пăхса янă-яман
Тепĕр приказ янрарĕ:
«Купана салатмалла,
Йăран çинчи çум курăка
Тăпăлтарса тухмалла».
Ни пӳртре, ни çенĕкре
Пуçа тĕксе пулмарĕ.
— Эп те ёнер анкартинче
Упаленсе ывăннă,
Çĕрле канлĕ çывăрнă.
Аслăк тăрне кайса кан.
— Хăпарнăччĕ, выртнăччĕ,
Минренĕ чăх йăнкăрнипе
Кăтăш туса пулмарĕ.
— Çăвар карса лариччен
Пулă тытма каймалла.
— Атя эппин, каç пуличчен
Мĕн те пулин тумалла.

## САНТĂР

Икĕ юлташ хĕр пĕрчи
Кил картинчи сак çинче
Пăшăл пăтти тăваççĕ:
— Чăланта пытаннă Сантăр
Хулăн кĕнеке вулать.
Мĕн çинчен-ши кĕнеки?
Чăлан алăкĕ чараксăр,
Кăшт тĕкен те — уçăлать,
Кĕрсе ыйт-ха, мĕн калать?
— Вĕçĕ пур пуль кĕнекин?
Пĕтерĕ те вуласа
Парĕ-халĕ каласа.

— Анне ялан: «Пирĕн Сантăр
Шкул вĕренсе пĕтерсен
Института каять, — тет. —
Лайăх вĕренсе тухсассăн,
Эс итлетĕн-и, Наçтук,
Пирĕн Сантăр, çакă Сантăр
Профессорах пулать», — тет.

## КАЧАКА ТАКИ

Вĕçкĕн качака таки
Тăрслаттарса ташланă,
Лачакана çакланнă.
Енчен енне сулăннă,
Кăтра пуçĕ усăннă.
Юркка кĕтӳ кĕтсе илнĕ,
Кăвак така курăнман,
Те кĕтӳрен çĕтсе юлнă? —
Йыхăрсан та сас паман.
Утар çырми шурлăхĕнче
Тăра парать чĕтресе,
Юркка ăна алă çинче
Йăтса килчĕ çĕклесе.
Тяпписене ăшă шывпа
Çуса ячĕ, типĕтрĕ,
Качакийĕ хăй путекне
Тăрантиччен ĕмĕртрĕ.

«Анне, текех сан çумăнтан
Ниçталла та хăпмастăп», —
Терĕ пулĕ мекеклетсе
Амăш çумне тĕршĕнсе.



## СВЕТЛАНĂПА АЛЬБИНА

Аппăшĕпе йăмăкĕ
Кăмпана каяççĕ,
Пĕрер кунтăк тултарса
Хăвăрт таврăнаççĕ.
Тасатаççĕ, çăваççĕ,
Сарă, шурă кăрăçне
Тăварласа лартаççĕ.
Уплюнккипе маслюнккине
Ашшĕ-амăш килнĕ çĕре
Йăшаласа хураççĕ.

Кĕтӳ кĕртсен, каç пулттипе,
Вăйă курма тухаççĕ,
Хăлхисене чăнк тăратса
Аслисене тăнлаççĕ.
Яшсем-хĕрсем ачасене
Вăй картине чĕнсессĕнех —
Чупса кĕрсе тăраççĕ,
Юрлаççĕ те ташлаççĕ.
Çӳл тӳпери куç хĕсекен
Çăлтăрсене шутлаççĕ.

## КĂРККА

Кам-ши кăрккан шакла пуçне,
Тем вăрăмăш пĕсехине
Хĕрлĕ тĕспе сăрланă,
Хура-симĕс-хăмăр шупăр
Тăхăнтарма пултарнă?

Кăркка кайăк çуначĕсем
Вĕçме вуçех пĕлмеççĕ,
Кам та пулин кӳрентерсен
Хăпартланса илеççĕ.

Ну вара-а, кăркка хӳри-и,
Тĕлĕнтермĕш! — çав тери.
Ахаль чухне — шăпăр пек,
Кăр кăрласа юрланă чух —
Шерепеллĕ саппун пек.

## ЁМĔТ

Пĕр чиперкке хĕр ача
Сăвă çырма шутланă
Шутланине çырса хурса
Пĕр концертра вуланă:
«Эпĕ Чăваш çĕршывĕнче
Чăваш пулса пурнатăп,
Тăван тавра сывлăшĕпе
Кăкăр туллин сывлатăп.
Эп çуралнă-çуралманах
Анне юрă юрланине,
Атте юмах юптарнине
Куçа чарса тăнланă.
Уткалама пуçласанах
Анне тунă пуканепе,
Атте тунă теттесемпе
Каçса кайсах вылянă.
Путене пек йăпăртатса
Вĕренесчĕ ташлама,
Шăпчăк евĕр, чĕкеç евĕр
Вĕренесчĕ юрлама.
Ӳссен — артист пулатăп,
Шупашкарти театрта
Спектакльсем вылямашкăн
Ĕмĕтленсе пурнатăп».

## ÇУМĂР ТАШШИ

Пысăк ялăн çиййĕнче
Пысăк пĕлĕт чарăнчĕ,
Унăн йывăр кутамккинчен
Çумăр пĕрчи сапăнчĕ.

Шăпăр-шăпăр юрласа,
Тăпăр-тăпăр ташласа
Ак пĕри çĕре сикет,
Ак теприйĕ сирпĕнет...
Шăппи-шаппи, пăтти-пат,
Çара ури çăтти-çат.

Йывăç тăрри, пӳрт тăрри,
Курăк тăрри, шыв тăрри,
Çумăр пĕрчипе пĕр харăс
Тапăртатса-шапăртатса
Çатăлтатса юлтăр-и?..

# ЧИР

Ванюшпа тупăшмалла
Эпĕ — виççĕ, Ванюш — иккĕ
Мороженăй çирĕмĕр,
Чир çапрĕ пуль, ӳкрĕмĕр.
«Кола» ĕçес вырăнне
Вĕретнĕ сĕт сыпатăп,
«Сникерс» чăмлас вырăнне
Эмел çăтса выртатăп.
«Пĕрре патак парас пулать,
Вара астуса юлать,
Иртĕхтерсе янă та-ха,
Тем те пĕр илсе хыпать.
Укçине те мĕн чул ыйтать,
Çавăн чухлĕ параççĕ,
Таçта çӳрет, темскер çиет,
Пĕртте шута хумаççĕ», —
Куçĕпеле шăтарасла
Анне çине тĕллесе
Ятлиш тăвать асанне.
Хăй вара мана: «Асту,
Чир шала каяс пулсан
Укол тума пуçлаççĕ,
Ви-ирлĕ патак параççĕ.
Айта сывал хăвăртрах,
Эй сана-а, айва-ан, пуçта-ах,
Яка пыр çав эс кăшта-ах...» —
Хашшăн сывласа илет те
Пылпа хутăш курăк шывне
Ӳкĕтлесех ĕçтерет,
Çамкаран тытса пăха-ать,
Çӳçĕмрен шăлса яра-ать,
Юратать пуль — кулянать.



## САДИКРА

Эпӗр, пӗчӗк ачасем,
Садика ҫӳретпӗр:
Чӑвашла та вырӑсла
Калаҫма пӗлетпӗр,
Такӑнмасӑр вулама
Вӗренсе ҫитетпӗр.
«Атте, анне, папа, мама», —
Тесе ҫыру ҫыратпӑр,
«Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ, тваттӑ,
Раз, два, три, четыре, пять», —
Чип-чиперех шутлатпӑр.

Часах шкула каятпӑр,
Часах пысӑк пулатпӑр.

## ЙӐВА

Пӳрт тӑррин кӗтессинче
Чӗкеҫ йӑва ҫавӑрчӗ,
Ҫу кунӗсем ҫитеспеле
Виҫӗ чӗпӗ кӑларчӗ.
Суккӑр, ҫара чӗпӗсем
Ҫӑвар карса лараҫҫӗ,
Амӑш панӑ апатне
Чӑмламасӑр ҫӑтаҫҫӗ.
Пӗр пӳлӗмлӗ йӑвара
Ашшӗ-амӑш, виҫӗ ачи
Мӗнле вырнаҫаҫҫӗ-ши?..
Ҫумӑр ҫусан, тӑвӑл тухсан
Мӗнпе хупланаҫҫӗ-ши,
Йӗпенсе шӑнмаҫҫӗ-ши?..

## ТЕТТЕ

Амăш пӳрте кĕнĕ-кĕмен:
«Уляна, Анюк, салам!
Иксĕре пĕрер парне,
Акă мăшăр пукане.
Атьăр-ха тумлантарас,
Питĕ хитре, чăвашла,
Савăннипе чăтаймасăр
Юр юрласа ярасла.
Касатпăр та çĕлетпĕр,
Шăрçаласа тĕрлетпĕр.
Ухтиярне шур шĕлепке
Тăхăнтарни килĕшет,
Селимене — кĕмĕл тухья,
Шӳлкеме, саппун, тевет.
Шукăль, капăр пултăр тесен
Тăрмашса ларма тивет», —
Терĕ савнă хĕрĕсене
Ыталаса чуптуса.
«Куç хăрать те ал тăвать» —
Йăпăр-япăр ĕç пырать:
— Пуканисене вара
Çăпата-ши, атă-ши
Тăхăнтарсан лайăх-ши?
— Çăпатине ăна, хĕрĕм,
Ĕçе кайма сырнă тет,
Уявсенче тапăртатма
Сăран атă пулнă тет.
— Аттене, килнĕ-килмен,
Хамăр çума лартатпăр,
Тăхăнтарса тумлантарсан
Пурте пĕрле карталанса
Вăйă юрри юрлатпăр.

## НАЯН

Пӳрт умĕнчи крыльцара
Ларакан Микуç патне
Пырса тăчĕ Алексçи.
— Чиперех пурнатăн-и,
Ма выляма тухмастăн?
— Каникул пу-уль, канатă-ăп,
Кăнтăрлаччен çывратăп,
Телевизор пăхатăп...
— Атя пĕрле шыв хĕрне.
— Вĕренмен-ха эп ишме...
— Апла лапталла выляс...
— Чупас килмест, вылямас.
— Велосипед пур вĕт сан,

Илсе тух та, ярӑнан.
— Ру-уль тытса пырас пулать,
Педальне-е пусас пулать.
А тӑрук ӳкес пулсан,
Ҫамкана ватас пулсан?
— Пи-итӗ ярӑнас килет,
Ҫук ҫав ман велосипед...
— Кӗҫех атте килмелле-е,
Мана валли илмелле-е
Апельсин та шӑккалат,
Арбу-уз, бана-ан, виногра-ад.
— Юрӗ, чуптарам-ха эп.
— Эпӗ те пӳрте кӗреп.

## ҪӐЛ КӲЛЛИ

Тапса тӑран ҫӑл кӳлли
Шӑрӑхра та иксӗлми.
Ун тавра ҫаран, вӑрман,
Шыв ӗҫме анать пӑлан.

Хур-кӑвакал хӗвӗшет,
Кикак тӑрна вӗркӗшет,
Ҫамрӑксем, ватти-вӗтти
Ҫуйхашса шыва кӗрет.

Тарӑн кӳлӗ тӗпӗнче
Вашават ҫӑлкуҫ кӗрлет,
Килсе каян хӑнисене
Имлӗ шывӗпе сиплет.

Тайма пуҫ Ҫӗр-аннене,
Вӑл ҫуратнӑ Ҫӑлкуҫ ятлӑ
Ырӑ, ӗҫчен ачине.



# ПАРНЕ

Катя паян асламăшне
Курма кайнă хăнана.
Тутлă чейне ёçнĕ чухне
Сăмахларĕç ак çапла:

— Каникула мĕскер туса
Ирттеретĕн, Катенька?
— Пÿрт умĕнчи чечексене
Кашни кунах шăварап,
Шкула кайма вăхăт çитсен
Вĕрентекен учителе
Парнелеме шухăшлап.
Каникулта анкартинче,
Картишĕнче ĕçлерĕм,
Атте-анне савăнать те,
Ывăннине сисмерĕм.
Хитре костюм, портфель, пенал
Илсе пачĕç, ырларĕç,
Çуралнă кун компьютер та
Парнелеме шантарчĕç.

— Аслаçупа асаннÿрен
Мĕнле парне кĕтетĕн?
— Кирлĕччĕ «Энциклопеди»,
Пи-итĕ ăслă кĕнеке,
Хакĕ пĕчĕк мар, çавах
Кирлĕ парне — хаклăрах.



# АСАМАТ КĔПЕРĔ

Çара уран çатлаттарса
Урам варне чупса тухнă
Ачасемпе Кирук Анни
Селĕм юмах юптарать:

— Пĕлĕт çинчи пĕр-пĕр ялта
Мунча хутса янă пуль те,
Шывне тăкса янă пуль —
Ăшă çумăр чашлатать.
Çичĕ тĕслĕ, ай тур-тур-тур,
Ал шăлли те курăнать,
Йăлтăр-йăлтăр хĕвел шевли,
Ай тур-тур-тур, тĕр тĕрлет,
Çумăр — ахах шăрçисемпе
Шăтăклине чĕнтĕрлет.
— Асамат кĕперĕ у-у!..
— Сайра курăнать çав у-у!..
— Пирĕн кӳллех анчĕ пуль,
Чӳхенесси килчĕ пуль...
— Алпа тытса курасчĕ,
Шăлăнса та пăхасчĕ...
— Кам маларах? Айтăр чупас,
Кӳл хĕрне çитсе кура-ас!..

Ыткăнтарчĕç шĕвĕрсем,
Вĕлтлетеççĕ урисем...

# САС ПАЛЛИ

Ашшӗ калать: «Саккӑр», — тет,
Вова калать: «Шаккӑр», — тет.
Ашшӗ хӑйӗн ывӑлне
Шак! тутарать ҫамкинчен:
«Тӗрӗс калаҫма вӗре-ен,
«С-с-с» темелле, «ш-ш-шӑ» мар,
Санюк, Сантӑр, сӑмавар.

Амӑш калать: «Коля», — тет,
Саша калать: «Оля», — тет.
«Кулач» тетӗп, «улач» тет,
«Кушак» тетӗп, «ушак» тет.
Остюм, онфет, шо-алад —
Латти ҫук вӗт, калаҫать.

«Акета» мар, р-ракета,
«Адио» мар, р-радио», —
Тепӗр килтен илтӗнет... —
Ҫын калаҫма вӗренет.

Сас паллинчен пуҫласа
Сас тухать: сӑмах, шырав,
Калаҫу, ҫыру, вулав —
Ҫырӑнать: юмах, калав,
Сӑвӑ-юрӑ, пил, халал.

# ТУПМАЛЛИ

Хисеп . . . . . . . . 3
Чĕпсем . . . . . . . . —
Шыв хĕрринче . . . . 5
Кăв-вак . . . . . . . —
Ну, чăва-аш! . . . . . 6
Кĕтерипе Валери . . —
Çивĕт. . . . . . . . . 7
Павăл . . . . . . . . 9
Кĕвĕ . . . . . . . . . —
Амăшĕ . . . . . . . . 10
Утмăл турат . . . . . —
Ылтăнпа Кĕмĕл . . . 11
Çумăр умĕн . . . . . —
Телей . . . . . . . . 13
Вăй виçни . . . . . . —
Чемпион . . . . . . . 14
Çăлтăр . . . . . . . . —
Ваççил . . . . . . . . 17
Сарă кайăк . . . . . —
Сашукпа Петюк . . . 18
Сантăр . . . . . . . . —
Качака таки . . . . . 19
Светланăпа Альбина . 21
Кăркка . . . . . . . . —
Ёмĕт . . . . . . . . . 22
Çумăр ташши . . . . —
Чир . . . . . . . . . 23
Садикра . . . . . . . 25
Йăва . . . . . . . . . —
Тетте . . . . . . . . 26
Наян . . . . . . . . . —
Çăл кӳлли . . . . . . 27
Парне . . . . . . . . 29
Асамат кĕперĕ . . . . 31
Сас палли . . . . . . 32

19=80

Литературно-художественное издание

*Для детей младшего и среднего школьного возраста*

**Светлана Азамат**

**ÇУМĂР ТАШШИ**

**ТАНЕЦ ДОЖДЯ**

Стихи

*На чувашском языке*

Художник *Т.И. Немцева*

Редактор *О.Л. Васильева*
Художественно-технический редактор *А.В. Семенова*
Корректор *А.Г. Владимирова*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 19.04.04.
Формат 84х108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,36. Учетно-изд. л. 2,16.
Тираж 2500 экз. Заказ № К-4468. Изд. № 13.

ГУП «Чувашское книжное издательство»,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12б.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.